


# НИКАМА ТА МАНМАН, НИМĔН ТЕ МАНĂÇМАН

## Аттем халĕ те асрах

«Аса илӳсен хĕлĕхĕ татăлсан пурнăç кĕвви те шăпланать» – акăлчан писателĕн Джордж Джеромăн çак сăмахĕсем паянхи кун та, пĕтĕм халăх Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче Çĕнтерӳ тунăранпа 75 çул çитнине кĕтсе илме хатĕрленнĕ чухне, хăйсен пĕлтерĕшне çухатмаççĕ. Çĕршыв ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне сыхласа хăварма вăрçă çулĕсенче фронта хăйсен çемье членне, тăван-пĕлĕшне ăсатман çемье пирĕн юратнă Чăваш Енре çуках. «Никама та манман, нимĕн те манăçман» – йывăр вăрçăн хирĕсенче хăйсен пурнăçне шеллемесĕр çапăçнă, тылра çĕрне-кунне пĕлмесĕр тăрăшнă хамăрăн тăвансемпе юлташсене, пĕлĕшсемпе кӳршĕсене аса илер, вĕсем умĕнче пуç таяр паян.

Манăн тăвансем те, Яранскисем – Василий Трофимович, Александр Ильич, Константин Филиппович, Егор Алексеевич – фронта тухса кайнă. Ĕмĕрлĕхех. Шăпи каялла таврăнма пӳрмен вĕсене, тек тăван киле, тăван яла килеймен, вăрçă хирĕнчех выртса юлнă.

Тăван Ярославка ялне иккĕмĕш сыпăкри пичче Порфирий Алексеевич Яранский разведчик, пĕтĕм Европа витĕр тухнăскер, тата манăн атте Пахом Трофимович Яранский кăна таврăннă.

Шел пулин те, атте пурăннă чухне эпĕ унăн вăрçă çулĕсем пирки сахал пĕлнĕ. Вăл пирĕнтен уйрăлса кайнă хыççăн кăна унăн пурнăçĕ пирки сведенисем пухма пуçăнтăм.

Атте чухăн хресчен çемйинче çуралнă. Вăл çуралнă чухне унсăр пуçне çемьере аппăшĕ тата икĕ аслă пиччĕшĕ пулнă ĕнтĕ. Чиркӳре ят хунă чухне пĕчĕк ачана священник Аслă Пахомий ятне панă. Ача 10 çулта чухне унăн ашшĕ çĕре кĕнĕ. 1925 çулта аслă пиччĕшĕ Иван Вăтам Азире басмачсемпе çапăçса пуçне хуни пирки хыпар çитнĕ.

1937 çулта Пахом Трофимович Муркаш вăтам шкулĕнчен пиллĕк лайăх паллăсемпе вĕренсе тухнă, Шупашкарти педагогика институтне вĕренме кĕнĕ. Тантăшĕсенни пекех, хаяр вăрçă унăн çамрăклăх çулĕсене те шеллемен. 1941 çулхи июнь уйăхĕнче вăл алла вырăс чĕлхипе литературин учителĕн профессине илни пирки диплом илме кăна ĕлкĕрнĕ, июлĕн 9-мĕшĕнче вара хула çар комиссариачĕ ăна çар службине чĕнсе илнĕ.

Василий пиччĕшне те çар службине илнĕ пулнă. Вăл 1942 çулхи çулла блокадăри Ленинграда хӳтĕленĕ чухне пуçне хунă. Вут тивертекен бомбăсене сӳнтернĕ, бомба çурăлнă чухнехи сывлăш хумне пула çӳллĕ çурт çинче тытăнса юлайман.

Аттен вăрçă чухнехи пурнăç çулĕ çапларах. 1941 çулхи сентябрьтен тытăнса 1942 çулхи январьчен Калинин фронтĕнче çапăçнă. Хыççăн 1945 çулхи февральччен 1-мĕш Прибалтика фронтĕнче пулнă. 1945 çулхи майăн 9-мĕшне 3-мĕш Белорусси фрончĕн йышĕнче кĕтсе илнĕ. 1944 çулхи октябрьтен тытăнса 1945 çулхи июньчен совет çарĕсен йышĕнче Хĕвелтухăç Пруссири Ширвиндт, Гумбиннен тата Кенигсберг хулисенче пулнă.

Аттен упранса юлнă «Dein fuz immez» трофей открыткисем çинче хăй аллипе çырнă çак сăмахсене вулатăп: «Фронта кайни шăп çултталăк. Июлĕн 6-мĕшĕнче пирĕн чаçе нимĕçсем çавăрса илчĕç. Июлĕн 9-мĕшĕнче, тăшман ункинчен тухма хăтланса Смоленск таврашĕнчи сĕм вăрманĕсемпе шурлăхсем тăрăх тухнă хыççăн, уçланкăра канма чарăнтăмăр. Çулсем иртĕç, эпир телейлĕ пулăпăр. Акă мĕн канăç кӳрет мана. 09.07.1942.8-00».

Вăрçă хыççăн Пахом Трофимович аса илетчĕ: «Нимĕç ункинче пулнă чухне кăвайт та чĕртме май çукчĕ. Нимĕçсем сисме пултарнă. Хамăрпа пĕрле çăнăх миххи кăна пулнăччĕ. Хырăм выççине иртterме ăна шурлăх шывĕпе хутăштарса ăша яраттăмăр... Каярахпа нимĕçсем çине пирĕн авиаци бомбăсем пăрахма тытăнчĕ. Хамăрăннисен аллинченех вилес килместчĕ. Ункăран тухнă хыççăн куратпăр – пирĕн офицер çурри таран кăвакарса кайнă...»

Смоленск облаçне нимĕçсенчен хăтарнă чухне атте манăн аннене Анастасия Егоровнăна тĕл пулнă. 1944 çулта вĕсем пĕр мăшăр пулса тăнă. Мăшăрне Пахом Трофимович тăван Чăваш Ене ăсатнă. Кунта ăна вĕренме педагогика институтне йышăннă. Института ун чухне Сĕнтĕрвăррине куçарнă пулнă. Пахом Трофимович мăшăрне хăйĕн аттестатне ярса панă. Ку вăл офицерсене тӳлекен укçана илме кирлĕ пулнă. Аттепе анне хăйсен хутшăнăвĕсем яланах таса пулни пирки аса илетчĕç.

Çавна та каласа хăварасшăн. Ярославкăра та, Хорнуйĕнче те (кунта аттен амăшĕ енчи тăванĕсем пурăннă) нимĕçсем арканнă тăрăхри 18 çулхи вырăс хĕрне Настьăна ырă кăмăлпа, ăшшăн кĕтсе илнĕ, май килнипе пулăшма тăрăшнă.

Пахом Трофимович, империалистла Японипе пынă вăрçа хутшăннă май, Забайкальски фронт йышĕнче 1947 çулхи июлĕн 11-мĕшĕччен полк командирĕн снабжени енĕпе ĕçлекен çумĕнче службăра тăнă.

Аттен вăрçă наградисен шутĕнче: Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕсем иккĕ, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин иккĕмĕш степень орденĕ, «За боевые заслуги», «За победу над Германией», «За взятие Кенигсберга», «За победу над Японией» медальсем.



1948 çулта, шкул директорĕн тивĕçĕсене пурнăçланă чухне, Нискасси вăтам шкулĕн икĕ хутлă çуртне тума хутшăннă. 1954 çултанпа Нискасси вăтам шкулĕн директорĕнче ĕçленĕ. Пушар пулнă хыççăн вăл ертсе пынипе шкулăн иккĕмĕш çуртне çĕкленĕ. Ял Совет депутатне суйланă май, ялти общество пурнăçне активлă хутшăнатчĕ, активлăхпа палăрса тăратчĕ. Шанса панă ĕçшĕн яваплăха яланах çирĕп туятчĕ, тӳрĕ кăмăллăччĕ.

**Светлана ЯРАНСКАЯ.**

**Сăн ӳкерчĕкре: атте Пахом Яранский вăрçă çулĕсенче.**

***Проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви пулăшнипе пурнăçланать.***

**Врач канашĕ**

## Сулхăна килĕштерет, çемçе вырăн шырать



**Апрель уйăхĕнчен тытăнса сăвăссен активлă тапхăр пуçланать. Вĕсем çуркуннерен пуçласа кĕркуннеччченех сиен кӳме пултараççĕ, анчах та май – июнь тата сентябрь – октябрь уйăхĕсенче уйрăмах активлă.**

Сăвăс курăк ăшĕнче пурăнать. Вăл сулхăнрах вырăнсене килĕштерет. Тĕмсем тăрăх та сăвăссем 1 метртан çӳллĕрех хăпарса каймаççĕ. Çын тăхăннă трико-шăлавар айне те, атă-пушмак ăшне те çăмăллăнах кĕрсе каяççĕ.

Сăвăссем ытларах вăрмансемпе парксенче тĕл пулаççĕ. Вĕсенчен ытларахăшĕ юнашар çын е чĕрчун иртсе каясса курăк çинче е çĕр çинче кĕтсе ларать. Çын çине хăпарсан сăвăс чылай вăхăт хушши тăрăнмалли меллĕ вырăн шырама пултарать.

Çавăнпа та сăвăс пулма пултаракан вырăна кайма пуçтарăнсан уçă атă-пушмак ан тăхăнăр, шăлавар пĕççисене те чăлха ăшне туса чикĕр. Ӳт çине хурт-кăпшанка хăратакан репеллентсем сĕрме пултаратăр. Вăрмантан таврăнсан вара вĕсене çуса ямалла.

Çутă тĕслĕ çи-пуç çинче сăвăса курма çăмăлрах. Вăрмантан таврăнсан çи-пуçпа пĕрлех ӳт-пĕве те асăрхаса пăхăр. Çак пĕчĕк, темиçе миллиметрлă хурт-кăпшанкă юн ĕмсе çитернĕ хыççăн «ӳсет».

Ӳте тирĕннĕ сăвăса пĕлсе, асăрханса кăлармалла, ӳтрен татса илмелле мар. Пинцетпа усă курмалла. Алă айĕнче нимĕнле хатĕр пулмасан, сăвăса марляпа татăкĕпе, салфеткăпа е урăх татăкпа тытса пӳрнесемпех кăлармалла. Хыççăн антисептик сĕрмелле.

Ӳте тăраннă сăвăса курсан хăшĕсем пĕлнĕ-пĕлмен кăлараççĕ, теприсем хăраса ӳксе нимĕн тума аптăраççĕ. Çак лару-тăрура медицина пулăшăвĕ ыйтмалла е сăвăса ӳтрен мĕнле кăлармаллине лайăх пĕлсен çеç хăвăр тĕллĕн кăлармалла. Сăвăс кăлармалла пулсан Муркаш больницин хирурги кабинетне çитмелле.

Сăвăс тирĕннĕ çынна медицина пулăшăвне кая юлмасăр памалла. Çийĕнчех май çук пулсан та пулăшу парассине вăçĕ кунран иртермелле мар.

Сăвăс – тирĕннĕ вырăн шыçса хĕрелет. Ку вăл – организмăн реакцийĕ. Çак хурт-кăпшанкă ӳте тирĕнсе юн ĕмни çын тӳрех энцефалитпа чирлеме пултарнине пĕлтермест. Апла пулин те сăвăса кăларнă хыççăн врач сĕннĕ препаратсемпе усă курмалла.

Сăвăса вара чĕрĕ хăварса икĕ талăк хушшинче (банкăпа холодильника лартма юрать) вирусологи лабораторине илсе çитермелле. Ăна тĕрĕслени сиплев мĕнле пулмаллине татса парать.

Сăвăс урлă çынна тĕрлĕ инфекци лекме пултарать, вăл шутра – сăвăс энцефаличĕ те. Çакă вăл – вирус инфекцийĕ. Унран тĕппипех сывалма пулать, анчах хăш чух çак чир сывлăх çинче йĕр хăварма та пултарать. Йывăр тĕслĕхсенче çын инвалид пулса юлма е пачах пурнăçран уйрăлма та пултарать.

Инфекци çынна тĕрлĕ майпа ерме пултарать. Пĕрремĕшĕ – ӳте вируслă сăвăс кĕрсе ларнипе, иккĕмĕшĕ – сăвăс нумай пулакан вырăнта çӳрекен качака е ĕне сĕчĕ урлă (сăвăссем выльăхсен ӳтне тăташах тирĕннĕрен вирус сĕтре те пулма пултарать). Вирус сăвăса çын хăй тĕллĕн ӳтрен тĕрĕс мар кăларнă чух та лекме пултарать.

Енчен те сăвăссем пур вырăнта час-часах пулма тивет пулсан, сăвăс энцефалитĕнчен прививка тума та юрать. Кун пирки район больницинче тĕплĕнрех ыйтса пĕлме пулать.

**Г. СОКОЛОВА,**
**Муркаш район тĕп больницин эпидемиолог врачĕ.**

**Культура**

## Юратнă кĕнекесене вулар

**Килте ларнă тапхăр – хамăрăн тавракурăма аталантарма меллĕ вăхăт. Çак хушăра мĕн те пулин çĕннине пĕлме, юратнă кĕнекесене тепĕр хут вулама, çавăн пекех Интернет уçлăхĕнчи хайлавсемпе паллашма май та, вăхăт та çителĕклĕ.**

Чăваш Республикин наци библиотеки «Чăваш литературин ылтăн çӳпçи: вуламалли 100 кĕнеке» пухăма (коллекцине) кĕнĕ хайлавсене вулама çеç мар, аудиокĕнекесем итлеме сĕнет. Эсир кăмăллăнă хайлава «Литературăллă Чăваш Ен: çĕрçуллăхри чи килĕшнĕ кĕнеке» вулав референдумĕнче те сасăласа хăвăр шухăшăра пĕлтерме пултаратăр. Ăна Чăваш Республикин наци библиотеки Чăваш автономи облаçне йĕркеленĕренпе 100 çул çитнине халалласа ирттерет.

Кăçал Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче çĕнтернĕренпе 75 çул çитет. Çавна май Чăваш Республикин наци библиотеки «Ачасем валли Тăван çĕршывăн аслă вăрçи çинчен вулатпăр» аудиокăларăмăн иккĕмĕш пайне хатĕрлесе çитернĕ. Унта чăваш çыравçисен 13 хайлавĕ кĕнĕ: поэмисем, сăввисем, калавĕсем.

Хайлавсене Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ Чăваш патшалăх çамрăксен театрĕн чăваш халăх артисчĕсем – С. Савельевăпа В. Павлов тата Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ артистки И. Архипова вулаççĕ.

Пĕрремĕш кăларăма П. Хусанкайăн «Таня» поэми, И. Микулайĕн «Госпитальте», «Чаплă пушмак» калавсем, С. Асамастăн «Тăлăха юлнă салтак арăмĕн тав хӳхлевĕ» сăвă, М. Ухсайăн «Улаçка», А. Александровăн «Пĕчĕк партизан» калавĕсем, А. Афанасьевăн «Вырăс капитанĕ» поэми тата ытти хайлав та кĕнĕ.

Асăннă тата ытти аудиокăларăма Чăваш Республикин электронлă библиотекинче вырнаçтарнă, ăна Интернет урлă итлеме май пур.

**Чăваш Ен Культура министерствин сайтĕнчен.**